**«Чăваш ачи чăвашах» республика шайĕнчи IV фестивалĕн положенийĕ**

**1. Пĕтĕмĕшле калани**

1.1. «Чăваш ачи чăвашах» республика шайĕнчи 4-мĕш фестивале (малалла – Фестиваль) пуçараканĕ тата йĕркелекенĕ Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин хушма професси вĕренĕвĕн «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» Чăваш Республикин бюджет учрежденийĕ (малалла – Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ) тата Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи «А.Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» пĕтĕмĕшле пĕлĕ паракан муниципалитет бюджет учрежденийĕ (малалла – Калайкасси шкулĕ).

1.2. Фестиваль тĕллевĕ: Чăваш Республикин шкулĕсенче тăван чĕлхепе культурăна аталантарасси.

1.3. Фестиваль задачисем**:**

- Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен калакан саккунĕпе килĕшӳллĕ пур вĕрентекене те уроксене чăвашла ирттерме хавхалантарасси;
- ачасене тăван халăх йăли-йĕркине тытса пыма хăнăхтарасси;
- шкул ачисен тăван халăх чĕлхипе литературине, историпе культурине вĕренес кăмăлне çĕклесси.

**2. Фестиваль ăмăртăвĕсем**

**21. «Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн»** (шкул çулне çитмен ачасем тата шкулта вĕренекенсем чăваш халăхĕн пĕр-пĕр йăлине кăтартса параççĕ);

**2.2. «Вĕрентетпĕр чăвашла»** (чăваш чĕлхи предметне вĕрентмен учительсем хутшăнаççĕ, чăвашла уроксем кăтартаççĕ).

**3. Фестивале хутшăнакансем**

**3.1. «Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн»** ăмăртăва Чăваш Республикин шкулччченхи вĕренӳ организацийĕсен тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп/вăтам шкул ушкăнĕсем хутшăнаççĕ.

**3.2. «Вĕрентетпĕр чăвашла»** ăмăртăва шкулсенче чăваш чĕлхипе литератури предметне вĕрентмен учительсем хутшăнаççĕ.

**4. Фестиваль йĕрки**

4.1. Фестиваль 2020 çулхи чӳк уйăхĕн 16-30-мĕшĕсенче инçет мелпе иртет.

4.2. Фестивале хутшăнакансен чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕччен chavashachi20@mail.ru электрон адреспа ярса памалла:

1) Фестивале хутшăнассине пĕлтерни (2-мĕш хушса панипе килĕшӳллĕн);

2) чăваш йăли-йĕркине е вĕрентекен урокне ӳкерсе илнĕ 10-15 минутлăк видеоролик.

4.3. Ăмăрту уйрăмлăхĕсем:

4.3.1. **«Вĕрентетпĕр чăвашла» ăмăрту.**

«Вĕрентетпĕр чăвашла» ăмăртура 5-11 классенче чăваш чĕлхи предметне вĕрентмен учительсем уçă уроксем кăтартаçĕ.

Конкурсра хутшăнакансен ĕçне жюри членĕсем çак критерисемпе хаклаççĕ: урока йĕркеленине, темăна интереслĕ те кăсăклă пама пултарнине, тăван халăх историйĕпе культурине урок темипе çыхăнтарма пĕлнине, вĕрентекен пуплевĕн пахалăхне, чăвашла тĕрĕс те таса калаçма пултарнине, урокра тĕрлĕ меслетпе мелпе усă курма, ачасене хавхалантарса ĕçлеттерме пĕлнине шута илеççĕ.

4.3.2. **«Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн» ăмăрту.**

«Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн» ăмăртура ачасем чăваш халăхĕн пĕр-пĕр йăли-йĕркине кăтартса параççĕ.

Конкурса шкул çулне çитмен ачасен тата кĕçĕн классенче вĕренекен ачасен ушкăнĕ хутшăнать. Ушкăнра 7 ачаран ытла пулмалла мар. 7-10 минут хушшинче чăваш халăхĕн

пĕр-пĕр йăлине кăтартса памалла. Жюри членĕсем ачасем тĕрĕс те илемлĕ калаçма пĕлнине, хăйсене сцена çинче тивĕçлĕ тытнине, ачасен тумĕпе йăла-йĕрке содержанийĕ килĕшсе тăнине хаклаççĕ.

## 5. Фестиваль пĕтĕмлетĕвĕ

5.1. Фестиваль пĕтĕмлетĕвĕпе раштав уйăхĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн сайтĕнче http://gov.cap.ru/?gov_id=121 адреспа паллашма пулать.

5.2. Фестивале хутшăнакансене пурне те ĕнентерӳ хучĕ (сертификат) параççĕ.

5.3. Çĕнтерӳçĕсене диплом парса хавхалантараççĕ.

5.4. Фестиваль ăмăртăвĕсене хутшăнакансен автор прависене Раççей законĕсене пăхăнса хӳтĕлеççĕ.

## 6. Ыйтса пĕлмелли телефонсем

8 (8352) 58-47-19 – Егорова Анна Семеновна, этнокультура вĕренĕвĕн кафедрин ертӳçи.

8-905-029-39-41 – Петрова Людмила Германовна, этнокультура вĕренĕвĕн кафедрин методисчĕ.